Шупашкар район хаçачĕ ❋ 1932 çулхи июлĕн 27-мĕшĕнче тухма пуçланă

# ТĂВАН ЕН

94 (9387) № ❋ 2007 çулхи августăн (çурла уйăхĕн) 22-мĕшĕ. Юн кун ❋ Хакĕ ирĕклĕ

❋ Вĕрентӳ

## ÇĔНĔЛЛЕ ĔÇЛЕМЕ ПУÇЛАНИ ÇИТĔНӲ ПАТНЕ ИЛСЕ ПЫРАТЬ

***Вăхăт хăвăрт шăвать, çуллахи каникул вĕçленесси те эрнерен катăлчĕ. Умра – черетлĕ çĕнĕ вĕренӳ çулĕ. Мĕнле çĕнĕлĕхсем илсе килĕ вăл, ачасен вĕренӳри кăтартăвĕсем еплерех пулĕç, педагогсем хăш енпе çитĕнӳ тăвĕç? Ăна халех пĕлме çук. Паян, педагогсен августри анлă канашлăвĕ умĕн, иртнĕ çулхи вĕренӳри тата вĕрентӳри улшăнусемпе çитĕнӳсем çинче чарăнса тăрас килет. Çавна май вĕрентӳ управленийĕн начальникĕпе Г.В.НИКОЛАЕВПА тĕл пултăмăр.***

***– Паянхи пурнăç ыйтнă пек ачасене пĕлӳ парас тесен ниепле те улшăнусенчен пăрăнса иртейместĕн. Хăш-пĕр шкулта реорганизаци пулса иртрĕ...***

– Çапла, район пуçлăхĕн 2006 çулхи йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн Мăн Маркари тĕп пĕлӳ паракан шкул ачисем Ишеке çӳреме, Явăшри пуçламăш класрисем Мăналта вĕренме пуçларĕç. Çавна май иртнĕ вĕренӳ çулĕнче пирĕн 28 пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкул ĕçленĕ пулсан, вĕсенчен 20-шĕ вăтам (кунтан 8-шĕ базăллă шкулсем), 8-шĕ тĕп пĕлӳ панă. Кăçал майăн 31-мĕшĕнче район пуçлăхĕ тепĕр йышăну кăларчĕ. Унпа килĕшӳллĕн Иккассинчи тата Шăмăшри вăтам пĕлӳ паракан шкулсене тĕп пĕлӳ параканнисем тунă. Унти аслă классенчи ачасене çывăхри базăллă шкулсене автобуспа илсе каяççĕ. Çакă пĕлӳ пахалăхне ӳстерме май парать. Унсăр пуçне бюджет укçитенки те эффективлă усă курăнать.

***– 2006-2007 вĕренӳ çулĕнчен шкулсенче çĕнĕ базислă вĕренӳ планĕпе ĕçлеме пуçларĕç. Çавăн пекех профильлĕ вĕрентӳ вăй илме пуçларĕ.***

– Çĕнĕ базислă планпа хăш-пĕр предмета пуçламăш классенчех вĕрентме тытăнтăмăр. 3-мĕш класа çӳрекенсем информатикăпа туслашрĕç. Ют чĕлхене 2-мĕш класрах вĕрентетпĕр.

Районти пур шкулта та профильлĕ умĕнхи вĕрентӳ пырать, базăллă шкулсенче вара профильлĕ вĕрентӳ вăй илет. Ку енпе директорсемпе тата вĕсен воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕсемпе куст-ри канашлусем иртнĕ... 



Фото ӳкерчĕкĕ авторăн.

*Кăçал ылтăн медале тивĕçнисенчен пĕри – Кӳкеçри лицейри Евгений Порфирьев (сулахайри).*

Унта, паллах, профильлĕ вĕрентĕве ăнăçлă йĕркеленин çитĕнĕвĕн çулĕсене сӳтсе явнă. Çавăн пекех профильлĕ предметсене вĕрентме базăллă шкулсене ачасене турттарас, вăтам пĕлӳ паракан шкулсен вĕсемпе тачă çыхăнса ĕçлес ыйтусене хускатнă.

***– Çĕнĕлле ĕçлеме пуçлани çитĕнӳ нумай тума май парать.***

– Тĕрĕсех. Вĕрентӳ отличникĕсен шучĕ палăрмаллах ӳсрĕ. Выпускник-медалистсем пирĕн йышланчĕç. Акă, иртнĕ вĕренӳ çулĕнче сакăр ача ылтăн, 33-шĕ кĕмĕл медальсемпе шкултан тухса кайрĕç. Патшалăх пĕрлĕх экзаменĕсене те ăнăçлă тытаççĕ вĕренекенсем. Май-июнь уйăхĕсенче вырăс чĕлхипе тата математикăпа обязательнăй майпа тата тăхăр предметпа суйласа илсе хăйсен пĕлĕвне тĕрĕслерĕç. Пĕтĕмĕшле илсен, результатсем япăх мар. Математика предмечĕпе Анат-Кĕнерсен, Иккассисен, Çатра-Хочехматсен «иккĕ» паллăсем пулман, вăтам балпа пăхсан вара Анат-Кĕнерсем, Кӳкеçри лицей, Тренккассисем малти вырăнсенче тăраççĕ. Вырăс чĕлхипе Апашри, Иккассинчи, Çĕньялти, Çатра-Хочехматри, Толик Хураскинчи, Тренккассинчи шкулсенче вĕренекенсем «иккĕсем» «туянман». Вăтам балпа пăхсан Чăрăшкассисене, Анат-Кĕнерсене, лицее палăртмалла. Кунта çакна та каласа хăвармалла: Кӳкеçри лицейре, Тренккассинче, Атайкассинче пĕрлĕхлĕ экзаменсене тыттарассипе тĕллевлĕ ĕçлеççĕ.

(Вĕçĕ 4-мĕш страницăра.)

## *РЕЗЕРВА КĔМЕЛЛИ КАНДИДАТСЕНЕ ПĂХСА ТУХРĔÇ*

***«Единая Россия» партин районти уйрăмĕ тунти кун хăйĕн анлă пухăвне пуçтарăнчĕ. Унта вырăнти политканашăн членĕсем, партин пуçламăш уйрăмĕсен секретарĕсем, парти сторонникĕсем пулчĕç. Пухăва ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсем: бюджет, налук, предпринимательствăпа харпăрлăх енĕпе ĕçлекен комитет председателĕ А.В.Щербаков тата В.И.Николаев, район пуçлăхĕ А.П.Князев хутшăнчĕç.***

Пуçтарăннисен пĕртен пĕр ыйту çеç пăхса тухма тиврĕ. Пĕтем Раççейри «Единая Россия» политика партийĕн Чăваш Енри уйрăмĕ çирĕплетнĕ РФ Патшалăх Думин суйлавне хутшăнакан кандидатсен списокне йĕркелемелли кадрсен резервĕпе паллашрĕç, тухса калакансем çирĕплетнĕ кандидатсене майлă пулнине пĕлтерчĕç. Списока Чăваш Ен ертӳçи ***Николай Васильевич Федоров*** уçать. ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ ***Михаил Алексеевич Михайловский*** те республикăра паллă çын. Çавăн пекех РФ Патшалăх Думин комитечĕн председателĕн ***Константин Иосифович Косачевăн***, РФ Патшалăх Думин депутачĕн ***Павел Владимирович Семеновăн***, Раççей Геройĕн ***Николай Михайлович Бударин*** летчик-космонавтăн хушамачĕсем те çак списокра.

Унта эпир хальлĕхе ытлашши илтсех кайман çынсем те пур. Вĕсем пухăва хăйсем килнĕ, хăйсем çинчен хăйсем каласа пачĕç. Акă, Муркаш районĕнче 1980-мĕш çулта çуралнă ***Евгений Германович Борисов*** Раççей Геройĕн ятне тивĕçнĕ. Чечен Республикинчи хирĕç тăрăва хутшăннă чух паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн çав ята панă ăна, «Ылтăн Çăлтăр» медальпе наградăланă. ***Алла Владимировна Самойлова*** – Президентăн перинатальлĕ центрĕн тĕп врачĕ. Вăл 1967 çулта Шупашкарта çуралнă. Обществăлла ĕçе те активлă хутшăнать. ***Михаил Владимирович Петров*** Патăрьел районĕнче харăсах икĕ ял хуçалăх предприятине – «Малалла» артеле тата «Первомайск» кооператива – ăнăçлă ертсе пырать. ***Елена Дмитриевна Сергеева*** Сĕнтĕрвăрри районĕнче çуралнă. Педагогика ĕçĕн ветеранĕ. Вăл – ЧР Патшалăх Канашĕн иккĕмĕш тата виççĕмĕш суйлавĕсен депутачĕ. «Единая Россия» партине педагог, пенсионер тата амăшĕ пулнă май суйланине пĕлтерчĕ. Шупашкарти ***Ильяс Шиазатович Калмыков*** – Чăваш патшалăх университечĕн 4-мĕш курс студенчĕ. Шупашкар хула Пухăвĕн депутачĕ. Вĕреннĕ вăхăтрах ĕçлет, «Торговый Квартал» ОООн директорĕ, Чăваш Республикинчи риэлторсен ассоциацийĕн президенчĕ. Кӳкеçри ***Алексей Владимирович Юрьев*** та депутат. Вăл – Кӳкеç ял тăрăхĕпе. Юрист пулса ĕçлет. Волейбол енĕпе арçынсен район сборнăйĕн капитанĕ, райцентрти хоккей командин вратарĕ.

***Парти кандидачĕсен кадр резервне кĕрекен çынсене кашнине уйрăм пăхса тухрĕç, парти членĕсем пурте вĕсене пĕр саслă пулса ырларĕç.***

В.ЭВЕРККИ.

## ВУТ-ÇУЛĂМ ХĔРХЕНМЕН

Августăн 17-мĕшĕнче, çĕрле, тĕп хулари И.Яковлев проспектĕнчи МТВ-центрта пушар тухнă. Ăна сӳнтерме темиçе сехет кирлĕ пулнă, пушарнăйсен 16 расчечĕ, пушар сӳнтерекен 80 автомашина тата ытти йышши техника 27 единица хутшăннă.

«Эверест» АО гендиректорĕ Н.М.Герасимов пресс-конференцире пушар сăлтавĕ МТВ-центра ятарласа чĕртсе янинче тесе пĕлтернĕ. Следователь те уголовнăй ĕç çурта ятарласа чĕртсе çунтарни пирки пуçарнă. Чăн та, урăх версисемпе те ĕçлеççĕ. Сăмахран, пушар тухас умĕн МТВ-центр çийĕн ракетницăран персе вĕçтерсе хăпартнине калаççĕ. Тен, вут-кăвар унтан тухнă текенсем те пур.

Пушар тухсанах унта ЧР Президенчĕ Н.Федоров тата Правительство пуçлăхĕ С.Гапликов çитнĕ. Налук тӳлекен предпринимательсене пулăшма шантарнă республика ертӳçи.

❋ Уй-хирте

## ИШЕКСЕМ - КĔРХИСЕМ ÇИНЧЕ

Августăн 20-мĕшĕ тĕлне районĕпе 4139 гектар çинчен пурĕ 7650 тонна тĕш-тырă çапса илнĕ. Ĕç калăпăшĕ – 49,8 процент. Тухăç гектар пуçне 18,5 центнер тухать.

«Слава» кооперативра кĕрхисене 50 гектар акнă.

В.ТИТОВА.

## АВТОБУССЕМ КИЛЕÇÇĔ

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче республикăри шкул автобусĕсен паркĕ тата та пуянланчĕ – ачасене турттарма 48 машина кӳрсе килнĕ. Ытларах – 22 вырăнлă КАВЗ маркăллă автобуссем, 21-шĕ вара 13 вырăнлă микроавтобус. Çакă «Вĕрентӳ» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн пулса пырать. Çапла вара çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче республикипе 253 автобус 11 пин ачана 800 ялтан пĕлӳ илмелли вырăна илсе çӳреме пуçлĕ.

Пирĕн район та ку вĕренӳ çулĕнче автобуссемпе пуянланĕ. Вĕрентӳ управленийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, акă, Апашри шкула 22 вырăнлă КАВЗ панă та. Çывăх вăхăтра тата виçĕ микроавтобус – ГАЗель – килмелле. Вĕсен хуçисем – Кӳкеçри лицей, Атайкасси тата Çĕньял-Покровски шкулĕсем.

А.СУСМЕТ.

## ЛАЙĂХ НАСТАВНИКСЕМ ПУР

Пултаруллисене палăртас тесе республикăра юлашки çулсенче час-час тĕрлĕ шайри конкурс ирттерме пуçларĕç. «Ĕçлекен çамрăксен чи лайăх наставникĕ» конкурс та кăçал пĕрремĕш хут иртрĕ. Апла пулин те унта 60 çын хутшăнма кăмăл тунă. Финалта призлă вырăнсене тухассишĕн 7 педагог, 8 промышленность представителĕ, ял хуçалăх енĕпе ĕçлекен икĕ специалист тупăшнă.

Пирĕн районтан та финала çитекен пулчĕ. Вăл – А.Шогулина. Альбина Германовна Ишлейри шкулта директорăн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕн лавне туртать, вырăс чĕлхипе литературине юратма вĕрентет. Ку конкурсра вăл «Бюджет сферинче ĕçлекен çамрăксен чи лайăх наставникĕ» номинацире 2-мĕш степеньлĕ Диплома тивĕçрĕ. Саламлатпăр, малалла тата та çамрăксене çул уçса вĕрентсе пымалла пултăр.

А.АЛИНИНА.

❋ Конкурса хутшăнма

## «АЧАСЕМ. ТЕХНИКА. ПУЛТАРУЛĂХ»

Çулсерен çак ятпа иртекен республикăри конкурса хальлĕхе вĕренекенсенчен 300 ĕç йышăннă та. Элĕк, Хĕрлĕ Чутай, Красноармейски, Сĕнтĕрвăрри, Етĕрне, Комсомольски, Елчĕк, Куславкка районĕсенчи çамрăксем активлă. Хамăр районти вĕренекенсене те пуçарулăх кăтартма ыйтас килет. Халĕ шăпах унта хутшăнма кăмăл тăвакан ачасенчен йĕркелӳçĕсем фото ӳкерчĕксем кĕтеççĕ. Вĕсене хушма пĕлӳ паракан «ЮНИТЕКС» центрта йышăнаççĕ.

Кая юлман-ха, сентябрĕн 1-мĕшĕнче çеç пĕтĕмлетӳ пулать. Ун хыççăн малти вырăнсене йышăннисем пĕтĕм Раççейри конкурса кайĕç.

А.АРДАЛИОНОВА.

❋ «Тăван Ен» - 2008

***Хисеплĕ вулакансем! Аса илтеретпĕр, почта çыхăнăвĕ августăн 31-мĕшĕччен хаçата йӳнĕрех – хальхи хакпах çырăнтарать. Шел, паллах, анчах сентябрĕн 1-мĕшĕнчен вăл хăпарса кайма пултарать. Çавăнпа васкăр, паянхи хакпах çырăнăр. Вăл 152 тенкĕ те 46 пуспа танлашать.***

РЕДАКЦИ.

### Синоптиксем пĕлтернĕ тăрăх

***Юн кун, августăн 22-мĕшĕ***
улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк,
кăнтăрла + 33
çĕрле +19

***Кĕçнерни кун, августăн 23-мĕшĕ***
улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк,
кăштах çумăр çăвать,
кăнтăрла + 32
çĕрле +19

***Эрне кун, августăн 24-мĕшĕ***
уяр,
кăнтăрла + 33
çĕрле +20

***Шăмат кун, августăн 25-мĕшĕ***
улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк,
кăштах çумăр çăвать,
кăнтăрла + 32
çĕрле +18

# ХАЛĂХПА ТĔЛ ПУЛНĂ ХЫҪҪĂН

***Кăҫалхи апрельте Пĕтĕм Раҫҫейри «Раҫҫей Пенсионерĕсен союзĕ» обществăлла организацин районти уйрăмĕн конференцийĕ иртнĕ. Союзăн Шупашкар районĕнчи тулли тивĕҫлĕ элчи пулма районти хисеплĕ ветерана Ульян Иванович ИВАНОВА суйланă (Шĕнерпуҫ ялĕнчен). Унтан уйрăм ĕҫĕ-хĕлĕ ҫинчен каласа пама ыйтрăмăр.***

– Пирĕн организацие республикăра йĕркеленĕренпе 10 ҫул та пур ĕнтĕ, – ***терĕ Ульян Иванович.*** – Чăн та, ҫынсем ăна пĕлсех каймаҫҫĕ, мĕншĕн тесен вăл хăйне халăхра питех кăтартман. Нумаях пулмасть Чăваш Енти организацие ертсе пыма вĕрентӳ министрĕн ҫумĕнче ĕҫленĕ В.В.Сапожникова суйланă (хальхи вăхăтра Шупашкарти педагогика колледжĕн директорĕ). Ҫуркунне союзăн черетсĕр V съездне делегат пулса хутшăнтăм. Халĕ республикăри кашни хулапа районтах организацин уйрăмĕ ĕҫлет.

***– Союз тĕллевĕпе паллаштараймăр-и?***

– Пенсионерсен интересĕсене хӳтĕлесси. Ҫак ĕҫе пурнăҫлатпăрах эпир, мĕншĕн тесен организацире тăракан йыш пысăкланса пырать. Виҫĕ пин ҫынран иртсе кайнă ĕнтĕ. Вĕсем – вырăнти чи хисеплĕ, пурте лайăх пĕлекен ҫынсем. Хăйсен ĕҫ-хĕлне вăйлатсах пыраҫҫĕ.

***– Районти уйрăм ытларах кăсăклантарать-ха пире...***

– Апрельте иртнĕ конференцире вăл хăйĕн кăҫалхи ĕҫ планне ҫирĕплетрĕ. Кашни ял тăрăхĕнчех ĕҫпе вăрҫă ветеранĕсемпе тĕл пулу ирттерме йышăнтăмăр. Ҫапла вара июль-август уйăхĕсенче конференци йышăнăвне пурнăҫласа районти кашни ял тăрăхĕнчех пенсионерсене чыспларăмăр. Сирĕнпе шăпах ҫав тĕл пулусем иртнĕ хыҫҫăн калаҫатпăр. Пытармастăп, халăхпа хутшăнни манăн чун-чĕрере ҫĕнĕ шухăш-кăмăл ҫирĕпленчĕ, ветерансен пурнăҫне лайăххах пĕлтĕмĕр. Ҫакă мана пенсионерсене хӳтĕлес тĕллевпе тивĕҫлĕ органсен умне ыйтусем кăларса тăратма хистет.

***– Тĕл пулусене районти хăш организацисенчен хутшăнчĕҫ?***

– Депутатсен пухăвĕсенчен, социаллă хӳтлĕх органĕсенчен, халăх сывлăхне сыхлакан учрежденисенчен, шалти ĕҫсен пайĕнчен, налук инспекцийĕнчен, ял тăрăхĕсен администрацийĕсенчен, районти социаллă пулăшу паракан центртан тата ытти ҫĕртен. Тĕл пулусенче пире 50 ытла ыйту ҫитерчĕ, пурне те хурав патăмăр.

***– Ҫынсене мĕнмĕн пăшăрхантарать?***

– Ытларах ҫакăн пек ыйтусем параҫҫĕ.

Чылайăшне район радиовещанийĕ пăчланса ларни кулянтарать. Ку ыйтупа хурав пама йывăр. Чăн та, эпĕ тĕл пулусенче район пурнăҫĕпе «Тăван Ен» хаҫат тулли информаци панине асăнмасăр хăварман. Ку енĕпе вăл радиовещани вырăнĕнчех паян.



У.И.Иванов.

Ялсенче хăш-пĕрисем кунĕн-ҫĕрĕн сăмакун е техника спиртĕнчен хатĕрленĕ суя эрех сутнăшăн тарăхаҫҫĕ. Вĕсене ҫынсем явап тыттарма ыйтаҫҫĕ. Шел те, тивĕҫлĕ органсем явап тыттарма тăрăшмаҫҫĕ. Ҫакă халăха питĕ вăрҫтарать.

***– Пенси укҫи пирки калакансем пулчĕҫ-и?***

– Тăван ҫĕршывăн Аслă вăрҫинче тыл ĕҫченĕсем пысăк хастарлăх кăтартнă, Аслă Ҫĕнтерĕве туптанă. Шел те, патшалăх хальлĕхе вĕсен тӳпине тивĕҫлипе хакламарĕ-ха. Тыл ĕҫченĕсен пенси укҫине вăрҫă ветеранĕсеннипе танлаштармарĕҫ. Ҫакă пире питĕ кулянтарать. Ман шутпа, пурăнакиле ҫак ыйтăва та татса пама май килĕ.

***– III кварталта пенсионерсен пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк пенси укҫи 2515 тенкĕпе танлашнă. Ҫакăнтан сахалрах илекен, ниҫта та ĕҫлемен пенсионерсене адреслă пулăшу панине «Тăван Ен» пĕлтерчĕччĕ. Ҫакăн пирки пĕлес текенсем пулчĕҫ-и?***

– Пулчĕҫ. Вĕсене ку ыйтупа районти социаллă пулăшу паракан центра каймаллине кашни тĕл пулурах пĕлтернĕ. Сăмах май, августăн 17-мĕшĕ тĕлне ҫав пулăшăва илме 475 ҫын заявлени пырса панă ĕнтĕ. 200-шне пăхса тухнă. Ҫак кунсенче 27-шĕ алла укҫа илет.

***– Тата мĕнле ыйтусем ĕҫклерĕҫ?***

– Раҫҫей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн 10 ытла категорин аптекăран эмел тӳлевсĕр илмелле. Шел те, чылайăшĕ халиччenех ҫак ҫăмăллăхпа усă кураймасть. Лару-тăру ҫулталăк пуҫламăшĕнче паянхинчен йывăртарахчĕ. Кун пирки «Тăван Енте» ҫырсах тăтăр.

Ĕҫ ветеранĕсем санатори-курорт сиплевне кайма путевкăсем ыйтаҫҫĕ, 75 ҫула ҫитнĕ ҫынсен пенсийĕн никĕс пайне пысăклатмалла теҫҫĕ, ытти ыйтусем параҫҫĕ. Ҫĕршыври нумай предприяти Пенси фондне страховка укҫи вăхăтра куҫармасть, ҫавна пула мĕн пур категорие пенсипе тивĕҫтерсе тăрасси тепĕр чухне йывăрланать те. Пенси укҫине ӳстерме мар, мĕн пухăннине кашни уйăхра тӳленипех пĕтерсе пыраҫҫĕ. Ҫавăнпа хальлĕхе ӳстерме майсем ҫукрах теҫҫĕ.

***– Хăҫан ӳстереҫҫĕ вара?***

– Ҫĕршыв ертӳҫисем кăҫалхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен кăҫал иккĕмĕш хут ӳстересси ҫинчен пĕлтерчĕҫ.

***– Юрĕ, ыйтусем пачĕҫ тейĕпĕр. Вĕсене хуравланă. Малалла мĕн?***

– Тивĕҫлĕ мерăсем йышăнма патшалăх тата муниципалитет органĕсене ярса паратпăр. Эпĕ пĕлнĕ тăрăх, Пенси фончĕн районти управленийĕ 14 ыйтăва ҫырсах хурав панă. 13-шне управлени ертӳҫи А.М.Исаева тĕл пулусенче хуравларĕ.

Пенсионерсен союзĕн уйрăмĕ ҫакăн пек тĕл пулусем районта малашне те йĕркелесшĕн.

Ю.МИХАЙЛОВ
калаҫнă.

## РАҪҪЕЙ ЯЛАВĔН КУНĔ

Паян – Раҫҫей Федерацийĕн Патшалăх ялавĕн кунĕ. Раҫҫей Федерацийĕн Патшалăх Думи 2000 ҫулхи декабрĕн 8-мĕшĕнче «Раҫҫей Федерацийĕн Патшалăх ялавĕ ҫинчен» саккун йышăннă. Федерацин конституциллĕ ҫак саккунĕпе Раҫҫей Федерацийĕн Патшалăх ялавне, унăн мĕнле пулмаллине тата унпа мĕнле усă курмаллине ҫирĕплетнĕ.

РФ Патшалăх ялавĕ – Раҫҫей Федерацийĕн патшалăхĕн официаллă символĕ. Ăна халĕ сăпкари ачасем те пăтраштармаҫҫĕ, мĕншĕн тесен кашни ял тăрăхĕн администрацийĕн ҫурчĕ ҫинчех вĕлкĕшет. Патшалăх, муниципалитет, федераци органĕсен ҫурчĕсенче те чи хисеплĕ вырăнта. Ҫавăн пекех вăл РФ Президенчĕн Администрацийĕн, РФ Федераци Пухăвĕн, Правительствин, Конституци сучĕн, Аслă сучĕн, Арбитраж сучĕн, Федерацин ĕҫ тăвакан ытти органĕсен ҫурчĕсем ҫинче инҫетренех курăнать. Чăваш Республикин Правительствин ҫурчĕ ҫинче те вĕлкĕшет. Патшалăх ялавĕпе ăҫта-ăҫта усă курма юранине асăннă саккунра тĕплĕн ăнлантарнă. Унпа саккун хирĕҫлекен ҫĕрте усă курнăшăн Раҫҫей Федерацийĕн саккунĕпе килĕшӳллĕн явап тыттараҫҫĕ.

❋ Уйăхлăх

## ХАМĂРА ХӲТĔЛЕМЕ ПУЛТАРАТПĂР-И?

Инкек килсе тухсан хамăра хамăр пулăшма пултаратпăр-и-ха? Шел те, анчах чылай чух ҫĕтсе каятпăр ҫав. Ҫапла ан пултăр тесе ĕнтĕ районта сентябрĕн 4-мĕшĕнчен пуҫласа октябрĕн 4-мĕшĕччен гражданла хӳтлĕх уйăхлăхĕ иртет. Район пуҫлăхĕн августăн 10-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе ун валли ятарлă комисси туса хунă. Председатель пулма район пуҫлăхĕн пĕрремĕш ҫумне – чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕҫлекен комисси председательне А.Е.Егорована ҫирĕплетнĕ.

Уйăхлăх вăхăтĕнче гражданла оборона, халăха тата территорие чрезвычайлă лару-тăруран тата пушартан хӳтĕлес енĕпе ял тăрăхĕсен хушшинче смотр-конкурс пулмалла. Тепĕр ăмăрту та иртĕ. Унта вĕсен хăйсене гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе хатĕрлемелли вĕрентӳпе пурлăх бази тĕлĕшĕнчен кăтартма тивĕ.

Шкул ачисем те уйăхлăхран аякра юлмĕҫ. Вĕсем «Эпир хăрушсăр тĕнчешĕн» ӳкерчĕксен конкурсне хутшăнĕҫ. Вĕрентӳ учрежденийĕсен хушшинче вара «Пурнăҫ хăрушсăрлăхĕн никĕсĕ» тата «Пурнăҫ хăрушсăрлăхĕ» курссем валли чи лайăх вĕрентӳпе пурлăх бази енчен смотр-конкурс иртĕ.

Уйăхлăх вăхăтĕнче ытти ĕҫе те чылай пăхса хăварнă. Сентябрĕн 21-мĕшĕнче, акă, террор актне пула Тренккасси шкулĕнче чрезвычайлă лару-тăру сиксе тухнине сирме тивĕ. Ҫук-ҫук, малтан пĕлтерсех ун пек хăтланмĕҫ террористсем. Тактикăпа ятарлă вĕрентӳ пулĕ вăл. Ĕҫлемен ҫынсене те гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ăнлантармалла. «ДЕЗ ЖКХ» муниципаллă предприяти никĕсĕ ҫинче пулĕ ун пек кăтартуллă заняти. Кăсăкли тата йĕркелемелле. Уйăхлăха октябрĕн 1-мĕшĕнче пĕтĕмлетĕҫ.

В.ЭВЕРККИ.

## ВЕТЕРАНСЕН ҪУРЧĔ – 15 ҪУЛТА

Августăн 10-мĕшĕнче ***Шăмăшри ветерансен ҫурчĕ уҫăлнăранпа 15 ҫул ҫитрĕ.*** Ҫак кунa паллă тума кунта районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳҫи А.А.Константинов, районти ĕҫпе вăрҫă ветеранĕсен канашĕн председателĕ И.П.Павлов, социаллă хӳтлĕх центрĕн ертӳҫи Л.В.Ананьева килнĕ. Пурте ăшă сăмахсем каларĕҫ, «Ҫак ҫуртра ветерансене пурăнма малалла та пур енчен ырри анчах пултăр», – терĕҫ. Ҫавăн пекех ватăсене Ҫĕньял ял тăрăхĕн пуҫлăхĕ Е.А.Зубков, вырăнти ветерансен ертӳҫи К.П.Михайлова саламларĕҫ. Шăмăшри ветерансен ҫуртĕнче пурăнакансене саламлама районти ветерансен ҫурчĕсен заведующийĕсем те ҫитнĕ. Пĕри те пушă алăпа килмен, кашниех парне пачĕ. Ҫурт ертӳҫи Л.Г.Федорова хăнасене чыслама килнĕшĕн тав турĕ, кунта пурăнакансен пурнăҫĕ ҫинчен каласа кăтартрĕ. Шăмăшри пултарулăх ушкăнĕ концертпа савăнтарчĕ.

Шăмăш тăрăхĕнче августăн 12-мĕшĕнче уяв малалла пычĕ. ***Иоанн ҫар ҫыннин ячĕпе тăлăх салтак арăмĕсен праҫникĕ*** иртрĕ. Ҫĕнĕ Шупашкарти чиркӳ пачăшки вилнисене асăнса ҫăва ҫинче кĕлĕ ирттерчĕ, Шăмăшра концерт, спорт вăййисем пулчĕҫ. Пухăннисене Ҫĕньял ял тăрăхĕн пуҫлăхĕ Е.А.Зубков саламларĕ, хăнасене така шӳрпипе, шашлăкпа сăйларĕҫ. Спортри ҫĕнтерӳҫĕсене пирĕн тăрăхра физкультурăпа спорта аталантарассишĕн нумай ҫул тăрăшнă, пирĕнтен вăхăтсăр уйрăлса кайнă А.Александров ячĕпе хисепленекен кубок пачĕҫ.

Август пуҫламăшĕнче Шăмăшри вăрҫă ветеранĕ ***Г.С.Семенов*** 80 ҫул тултарнă. Юбилей ячĕпе ăна районадминистраци пуҫлăхĕн парнине панă. Сăмах май, хисеплĕ Геннадий Семеновича Ҫĕньял тăрăхĕнчи ветерансен организацийĕ те саламланă, парне панă.

К.МИХАЙЛОВА, вырăнти ветерансен канашĕн ертӳҫи.

## ЮСАВ ПЫРАТЬ

Кӳкеҫри пурăнмалли ҫурт-йĕре тĕпрен юсама тăрăшаҫҫĕ. Сăмахран, Советски урамĕнчи 73-мĕш ҫуртăн канализаци пуссисене тата ăшă шыв парса тăракан пăрăхсене йĕркене кĕртнĕ, Шоссе урамĕнчи 29-мĕш ҫурт ҫивиттине ҫĕнĕрен витнĕ.

В.НИКОЛАЕВ.

**Х.Ҫ.** Чăваш Республикин Градостроительствин тата обществăлла инфраструктура аталанăвĕн министерстви пĕлтернĕ тăрăх, августăн 20-мĕшĕ тĕлне районти коммуналлă хуҫалăхсем ҫурт-йĕре хутса ăшăтмалли пăрăхсене улăштармалли графика – 35, пурăнмалли ҫурт-йĕр ҫивиттине ҫĕнĕрен витмелли графика 61 процент пурнăҫланă, икĕ енĕпе те районта графикран юлса ĕҫлеҫҫĕ тенĕ.

## ХУРАВ КĔТЕҪҪĔ

Тутаркасси ял тăрăхĕнчи Урай Макаҫ таврашĕнче кăяш полигонĕ тăвассине хирĕҫ ĕҫлекен пуҫару ушкăнĕн членĕсем пулчĕҫ редакцире, ҫĕнĕ хыпарсемпе паллаштарчĕҫ. Аса илтеретпĕр: вĕсем Чăваш Республикин Тĕп суйлав комиссийĕн умне Тутаркасси ял тăрăхĕнче кăяш полигонĕ тăвасси пирки референдум ирттерме ыйту лартаҫҫĕ. Ăна ирттермелле-и, ирттермелле мар-и – ҫакна ЧР Тĕп суйлав комиссийĕ татса парĕ. Хальлĕхе унтан пуҫару ушкăнĕ тăратнă ыйтăва пăхса тухрăмăр тесе пĕлтермен-ха. Тепĕр ҫĕнĕ хыпар: пуҫару ушкăнĕн членĕсем Урай Макаҫри Х.Макарова хăйсен йышĕнчен кăларнă. Ҫакна ял депутачĕ юлашки вăхăтра кăяш полигонне хирĕҫ сӳрĕккĕн ĕҫленипе ăнлантараҫҫĕ.

Ю.СЕРГЕЕВ.

## АЧАСЕМ ПУЛĂШАҪҪĔ

Августăн 1-мĕшĕнчен Кӳкеҫри Советски, Шоссе тата К.Маркс урамĕсенче шкул ачисем ҫӳп-ҫап шăлса ҫӳренине асăрхарăм. Физкультурăпа спорт комплексĕн таврашне те вĕсемех тирпей-илем кĕртнĕ. «Чувашское» АУО вара масар йĕри-тавра субботник йĕркелеме пулăшнă. Шкул ачисем кунта та хастарлăх кăтартнă.

С.СЕРЕГИН.

## МĔН ТЕРИ ИЛЕМ!

Куҫ умне тухса тăчĕ Ҫырмапуҫ ял тăрăхĕнчи Чăрăшкассинчи библиотекăра. Чечексем, чечексем... Саррисем, хĕрлисем, шуррисем... Выставкăна вырăнти ветерансен организацийĕпе ял тăрăхĕн администрацийĕ йĕркеленĕ. Унта Р.А.Васильева, М.А.Шачкова, А.Я.Маркова, Г.Я.Степанова, С.А.Ванюшкин, Е.Г.Иванова, Г.В.Королькова тата З.М.Туманникова чечек илсе пынă.

Ю.ЮМАН.

## ĔҪ ОПЫЧĔПЕ ПАЛЛАШРĔҪ

Вăрман-Ҫĕктер ял тăрăхĕнчен пĕр ушкăн нумаях пулмасть Муркаш районĕнчи Орининра хăнара пулчĕ, унти вăтам шкул тата Оринин ял тăрăхĕн ĕҫ-хĕлĕпе паллашрĕ. Вăрман-Ҫĕктерти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкул вĕрентекенĕсем те хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарчĕҫ. Икĕ шкулта вĕренекенсен тата ял тăрăхĕсен командисем ăмăртса волейболла вылярĕҫ.

В.ВАСИЛЬЕВ.



# ÇЕМЬЕ



## ТАÇТА ТА ПĔРЛЕ

Мăн Маркара пурăнакан Егоровсен çемйине, чăнах та, туслă тесе калас килет. Çемье пуçлăхĕ Анатолий хăйĕн юратнă мăшăрĕпе Людмилăпа 5 ачана кун çути кăтартнă. Вĕсем иккĕшĕ те нумай çул «Слава» ЯХПКра вăй хунă. Халĕ те, тивĕçлĕ канăва тухсан, Людмила Григорьевна Чаканарта мамăк фабрикинче ĕçлет. Упăшки картиш тулли выльăх пăхать. Пĕр-пĕринпе шăкăл-шăкăл çеç пурăнаççĕ Егоровсем. Вĕсен 4 яш каччă та пĕр хитре хĕр. Виçĕ ывăлĕ çемье çавăрма та ĕлкĕрнĕ. Кашнинех ача пур, пурте – хĕрсем. Людмилăпа Анатолий хăйсен виçĕ мăнукне юратупа çеç хупăрлаççĕ.

Канмалли кун-и е уяв кунĕ – Егоровсен çемйи яланах пĕрле. Пурте пĕрле савăнаççĕ, ĕçленĕ вăхăт çинчен калаçмалли те çук. Çемйипех вĕсем çав тери вăйлă та хăвăрт ĕçлеççĕ, хăваласа çитеймĕн.

Кĕçĕннисем хĕр пулнипе пӳртçурчĕ те яланах тирпейлĕ те пăхма кăмăллă. Юратнă хĕрĕ, Наташа, хулара вĕреннипе тăван киле кану кунĕсенче, пушă вăхăтра, килсе тасатса илемлетсе хăварать.

Çемье пуçĕ кунĕн-çĕрĕн выльăх картишĕнчен тухма пĕлмест. Çав тери нумай выльăх-чĕрлĕх усраççĕ вĕт-ха вĕсем! Мĕн чул вăй тата апатçимĕç кирлĕ çавăн чухлĕ выльăх пăхма. Сумалли темиçе ĕне, темиçе вăкăр, тынашкисем, сурăххисем, хурĕсем.

Темле йывăр пулсан та, çак çемье, чăн та, туслă та килĕштерсе пурăнакан çемье тĕслĕхĕ. Ĕçре те, канура та – яланах пĕрле Егоровсем.

К.СЕРЖИНА.




*«Ачасăр пурнăç – калчасăр уй-хир», – тенĕ ваттисем. Çак çамрăк мăшăра нихăш енчен те пырса тивмеççĕ ку сăмахсем. Çемье телейне тултаракан икĕ ывăл – вĕсен куç тулли илемĕ.*

**Калам-ха хамăн шухăша**

***Пĕччен хĕрарăма ача ӳстерме йывăррине пурте пĕлеççĕ. Чăнах та, пирĕн пурнăçра пĕччен хĕрарăмсем нумайлансах пыраççĕ: е вĕсем хăйсен ухмаххипе ача çуратса лараççĕ, е арçынĕсем ухмаха переççĕ. Кирек мĕнле пулсан та, ачана пĕччен ӳстерме питĕ хĕн.***

## "КУ – МАН АЧА!"

Тĕслĕх вырăнне хама хурам. Мĕн пĕчĕккренех мана анне пĕччен ӳстернĕ, хастар арçын тĕрекĕ юнашар пулман. Пулнă, анчах ухмах пулнипе яваплăхран хăраса тарнă. 90-мĕш çулсенче ачана çитĕнтерме пушшех те хĕн пулнă, ун чухне пирĕн çĕршывăн йывăр тапхăрĕ иртнĕ, Совет Союзĕ арканнă. Анчах, темле йывăр пулсан та, анне мана çитĕнтернĕ, хальхи вăхăтра та пулăшсах пырать пурнăç çулĕ çинче. Çакăншăн эпĕ ăна çĕре çити пуç таятăп.

Ача ялан пĕчĕк мар, вăл çитĕнет те – йывăрлăхсемпе пăтăрмахсем ӳссех пыраççĕ, укçа та нумайрах кирлĕ, «пар» сăмах ытларах илтĕнме пуçлани сисĕнет.

Çитĕнсе çитсен тин ачасем тăна кĕме пуçлаççĕ. Эпĕ те ăнланма пуçларăм аннене манпа еплерех йывăр килнине. Çак вăхăтра вара ашшĕсĕр çитĕннĕ ачасем малашлăха курма пуçлаççĕ. Малаллахи пурнăçра чи пĕрремĕш вĕсемшĕн – ашшĕсене куçĕсенчен пăхасси! Курсан мĕн тăвĕç-ши? Нимĕн те! Мĕншĕн тесен ашшĕ пулман пулсан вĕсем те пулаймĕччĕç. Ашшĕсем вĕсене пăрахса кайни вара хăйсен айăпĕ, ачисем çитĕнсе çитсен çеç, вĕсем пысăк çынсем пулсан: «Ку – ман ача!» – тесе сăмсине касăртса хураççĕ. Çавăнпа та яланах пĕрле пулма тăрăшмалла, ачан юратура çитĕнмелле.

К.НЕСТЕРОВА.

## ВĔСЕНЧЕ – МАНĂН ТЕЛЕЙ

***Нумаях пулмасть асаннен сăн ӳкерчĕкĕсене пăхнă вăхăтра сисмен çĕртен вĕсен хушшинче асанне аллипе çырнă хутсене тупрăм. Унта вăл хăйĕн пурнăçĕнчи асра юлнă самантсем çинчен чуна тивмелле уççăн та тĕплĕн каласа парать. Мĕн пĕчĕкрен чи çывăх çын тепĕр хут куç умне çав тери уççăн тухса тăчĕ. 80 çула çитнĕ асанне пирĕнтен уйрăлса кайрĕ. Анчах та унăн таса сăнарĕ пирĕншĕн чĕрĕ тĕслĕх вырăнне пулса юлчĕ. Акă мĕн каласа парать вăл хăйĕн çăмăл мар, анчах та телейлĕ самантсем пуян пурнăçĕ çинчен...***

***Эпĕ,*** Клавдия Александровна Кириллова, Шупашкар районĕнчи Шорчекасси ялĕнчи йышлă хресчен çемйинче 1926 çулта май уйăхĕн 10-мĕшĕнче çуралнă. 1934 çулта ялти пуçламăш шкулта вĕренме пуçларăм. Унтан лайăх паллăсемпе вĕренсе тухсассăн Хыркасси ялĕнчи вăтам шкула вĕренме кĕтĕм. 1937 çулта çичĕ класс вĕренсе тухрăм. Манăн малалла питĕ вĕренес, хамăра вĕрентекенсем пек ăслă пулас килетчĕ, анчах çемьере пурнăç йывăр пулнипе шухăшлани пурнăçланаймарĕ. Паянхи пекех аса илетĕп пирвайхи учителсене: Шешкенерти Василий Яковлевич Яковлев, Шемшерти Мария Семеновна, Чулкассинчи Нестер Семенович Кранацкий. Питĕ тăрăшса вĕрентрĕç вĕсем пире, пурнăç çулĕпе çирĕппĕн утма вăй пачĕç. Хыркасси ялĕнчен те нумай лайăх учительсем ĕçлетчĕç: Михаил Михайлович, Аркадий Григорьевич, Иван Федорович, Екатерина Ивановна, Петр Павлович, Михаил Дмитриевич тата ыттисем те. Аслă классенче вĕренме май пулмарĕ. Шемшер шкулĕнче курссем уçнине пĕлсен вара ĕçлеме кĕрес шутпа счетоводсен курсне çӳреме пуçларăм.

***Çав*** çулхине 1926 çулта çуралнисене ятарлă комисси урлă кăларса ФЗО шкулне пуçтарма пуçларĕç. Комисси сывă ачасем питĕ сахал пулнине палăртрĕ. Хамăр ялтан эпĕ пĕччен юрăхлисен шутне кĕтĕм, пĕрисен хăлхи япăх илтет, теприсем трахом чирĕпе аптраççĕ, виççĕмĕшсем кĕçĕллĕ. Мана счетовод курсне колхоз яман тесе пăрахтарсах ФЗОна ăсатрĕç. Пирĕн телее, Канашра нумай вăхăт илме килекен никам та пулмарĕ те, 10 кун хыççăн пурне те салатса пĕтерчĕç. Эпĕ те киле килтĕм. Вара МТСа комбайнерсен курсне вĕренме кайрăм. Тырă пиçсе çитсен комбайнера пулăшаканĕ пулса ĕçлерĕм. Комбайнерĕ бригадир пулнă май нумай ĕçе хама шанса хăваратчĕ. Иван Семенович Семенов питĕ ăста комбайнерччĕ. Бригадир, механик ĕçĕсене те хăех тăватчĕ. Хĕллехи юсав вăхăтĕнче механик пулса ĕçлетчĕ. Эпĕ унран нумай-нумай техникăпа паллашрăм та ĕçлеме те хăнăхрăм. Ун чухнех пĕр комбайна анчах пĕлни питĕ çителĕксĕрччĕ, мĕншĕн тесен комбайнне хăйне туртса çӳреме трактор кирлĕ пулнă. Хирти тырра вырса пĕтерсен йĕтем çинче нумайччен комбайнпа авăн çапнă. Ку ĕç вара çур хĕле çитетчĕ. Ĕçсем вĕçленсен комбайнсене хĕл касма хатĕрлеттĕмĕр.

***Трактористa*** МТСрах вĕрентме тытăнчĕç. Пĕр кун сиктермесĕр тракторист-сен курсне вĕренме çӳреме шухăш çуралчĕ. Шутлани чăнах та пурнăçланчĕ. Пĕрремĕш çулах мана трактор çинче



*Петр Кирилловичпа Клавдия Александровна.*

ĕçлеме çирĕплетрĕç. 40 хĕрачапа 3 арçын ача вĕренсе тухрăмăр. Хĕрĕхрен пĕр хĕрача трактористa пулăшаканĕ пулса тухрĕ. Эпĕ вара пĕччен 1-мĕш категориллĕ тракторист правине илтĕм. Мана трактористпулма вĕреннĕ чух эпĕ комбайнпа ĕçленĕ вăхăтра тракторпа çывăх паллашни пулăшрĕ. Ун чухнех манăн кашни пайне алăпа тытсах пăхас килетчĕ те, хураран, вараланчăк сĕрмелли япаласенчен йĕрĕнсе тăмастăмччĕ. Çумалла-и е сĕрмелле-и – пур ĕçе те тăваттăм. Вĕреннине кура çав çулах малти вырăнсене çĕнсе илме тӳр килчĕ. Тепĕр çулталăкран Канашри механизаци шкулне вĕренме ячĕç. Чиперех çав шкултан пĕлӳ пухса килтĕм. Ака-суха тунă çĕрте ĕçлесе каллех малти вырăнсене тухрăмăр. Пирĕн ĕçе хакласа Хĕрлĕ ялав парса хавхалантаратчĕç. Акатуйсенче вара сăн ӳкерчĕксене çакса хуратчĕç. Ун чухне çамрăкскерсем вăтаннă та, савăннă та ĕнтĕ.

***1946-мĕшĕнче*** çав çулсенче малта пыракан çамрăк трактористпа паллашрăм. Питĕ пĕр-пĕрин ĕçĕсемпе кăсăкланса çыхăну тытаттăмăр. Час-часах пĕр-пĕрне пулăшаттăмăр. Ĕçпе туптаннă туслăх çывăхлансах пычĕ темелле. Анчах 1946-мĕш çулхи кĕркунне ăна, Петр Кирилловича Кириллова, салтака илсе кайрĕç. Мана вара каллех МТСран Канаша механизаци шкулне 18 уйăхлăх вĕренме ячĕç. Унтан вĕренсе тухсан трактор çинчех ĕçлеме пикентĕм. Пирĕн ĕçе хака хурса 1946-мĕш çулта Кӳкеçри культура çуртне пуçтарса çĕршывăн йывăр вăхăтри пысăк хисеприи медальпе чысларĕç. Хавхаланса, кайри вырăна юлас мар тесе нумай тăрăшма лекрĕ. Тăраничен нихăçан çывăрса курма та çукчĕ. Тракторсем вăл вăхăтра часчасах çĕмĕрлетчĕç те МТСа юсав ĕçĕсем тума кайма лекетчĕ. Çулĕ çывăхах пулман, 10-15 çухрăма яхăн çуран утма та нумай лекнĕ. Хăш-пĕр трактор пайĕсем вырăнта çук пирки хамăрăн укçа тӳлесе кайса илме тиветчĕ. Юрать-ха, тимĕрç лаççисенче те питĕ кирлĕ япаласене тума пĕлекен ăстасем пурччĕ, станоксем çинче те пайтах çĕнĕ япаласем ăсталаса юсаттăмăр. Манма май çук самантсем куç умне тухса тăраççĕ. Мĕн чухлĕ суха кассинчен тухмасăр подшипниксене трактор айне кĕрсе выртса йĕркелемен-ши? Шутласа та тупас çук. Пирĕн бригадир, Григорий Николаевич Николаев, эпир ĕçленине асăрхаса йĕркелесех тăратчĕ. Хавхалантарма та пĕлетчĕ. «Малтанхи тракторсем, хальхи трактористкăсем», – тетчĕ вăл. Мĕншĕн тесен малтанах вĕреннĕ трактористсем сахалтарах пулнă, ĕçленĕ вăхăтра вĕренетчĕç.

***Астăватăп,*** пирвайхи трактор яла пырса кĕнине те. Уява тухнă пек ял халхи патне халăх пуçтарăнчĕ. Эпир, ачасем, çӳлерех хăпарса кĕтетпĕр çав. Малтан пăрăхран тухакан тĕтĕм курăнса кайрĕ, часах трактор сасси те илтĕнме пуçларĕ. Çывăхах çитсе чарăнчĕ. Куртăмăр мĕнле суха тунине, плугĕ те пур хайхи. Ватă çынсем ыйтнипе çĕре сухаласа кăтартрĕ. Пĕрисем арлан тăприне кăларать тесе каларĕç. Тырă кун пек пулмасть вĕт тесçĕ. Тракторист лайăх тăнлантарчĕ халăха, ака вăшăрах та тума май пуррине кăтартрĕ. Пĕтĕм халăх тĕлĕннипе хытса тăчĕ. Çав вăхăтра манра трактористa вĕренме шухăш çуралчĕ. Чăнах та, çĕршывăн йывăр саманта çитсен пире, хĕрачасем пулин те, тракторсемпе нумай вăхăт ĕçлеме тӳр килчĕ. 1942-мĕш çултан пуçласа 1958-мĕш çула çитиччен тракторпа ĕçлерĕм.

***1952-мĕш*** çулта Петр Кириллович салтакран таврăнчĕ. Малтанах лайăх пĕлнĕ трактористa манма май çук. Салтакран таврăннă хыççăн та çав ĕçех кӳлĕнчĕ. 1953-мĕш çул кĕр акисене пĕтерсен сентябрь уйăхĕн 20-мĕшĕнче пĕрлешсе самай вăйлă туй туса ирттертĕмĕр. Унтанпа нумай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ, ылтăн туй та хыçа юлчĕ, анчах пĕтĕмпех ĕнерхи кун пулса иртнĕн туйăнать.

***1954 çулхи*** сентябрĕн 14-мĕшĕнче пирĕн пирвайхи ача çуралчĕ. Пуриншĕн те çав тери пысăк савăнăç! Манăн хуняман хăйĕн хĕрачасем сахал пулнипе-ши, савăнмаллипех савăнчĕ. Сăмах май, хăй вăл 15 ача амăшĕ.

Нумаях та кĕтмелле пулмарĕ, ывăл çуралчĕ. Мĕнпе танлаштармалла-ши ашшĕн савăнăçне? Унтан 1958-мĕш çулта тепĕр хĕрача çурални каллех вĕçĕмсĕр савăнăç пулса тăчĕ. Хуняма юратсах пăхрĕ ачасене. Эпĕ пĕр кун та ĕçлемесĕр ларман тесен те тĕрĕсех пулать, мĕншĕн тесен вăл вăхăтра ачасене пăхма вăрăм отпуск паман. 1960-мĕш çулхи январĕн шартлама сивĕ кунĕнче пирĕн çемьере тепĕр ывăл хушăнчĕ. Ача лайăх çитĕнчĕ, çăва тухиччен самай аталанчĕ. Çулла вара ĕçе кӳлĕнме лекрĕ. Хамăр ял улăхĕнчех колхоз торф кăларттаратчĕ. Кашни кун кăнтăр апат вăхăчĕ çитсен киле ывăла кăкăр ĕмĕртме кайса килеттĕм.

1962-мĕш çул ашшĕ валли тепĕр телейлĕ самант – виççĕмĕш ывăл! Çулла çуралнăскерпе мĕнле ĕçрен юлăн, каллех ĕçе çӳреме пикентĕм, алăпа тырă вырма та çур пай парса хăварчĕç.

***Акă тепĕр*** пысăк савăнăç. 1964-мĕш çулхи февралĕн 7-мĕшĕнче тепĕр ывăл çуралчĕ. Ăна пăхса çитĕнтерме те хуняман нумай вăй хума тиврĕ. Хам вара ялти кирпĕч тăвакан завода ĕçлеме кĕтĕм. Мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччен унта тăрмашрăм. Пенсие тухсан вара тепĕр 20 çула яхăн кирпĕч тунă çĕртех ĕçлерĕм.

Ачасем пурте ӳссе çитсе хăйсен çемйисене çавăрчĕç, 18 мăнук парнелерĕç. Мĕн тери пысăк савăнăç - ачасем пурри!..

Константин КИРИЛЛОВ.

**Страницăна А.СУСМЕТОВА хатĕрленĕ.**

# ÇĔНĔЛЛЕ ĔÇЛЕМЕ ПУÇЛАНИ ÇИТĔНӲ ПАТНЕ ИЛСЕ ПЫРАТЬ

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра.)

***– Ачасен кăтартăвĕ педагогсем мĕнле ĕçленине кăтартать ĕнтĕ.***

– Паянхи куна районта 690 педагог вăй хурать. Вĕсем пурте ачана тарăн пĕлӳ пама, тавракурăмне анлăлатма тăрăшаççĕ. Ачасем çеç мар, вĕсем те район, республика шайĕсенчи тĕрлĕ конкурса хутшăнаççĕ. Паллах, çитĕнӳсĕр мар. Учителĕн ĕçне компьютер паян самай çăмăллатнине калама та кирлĕ мар.

Учитель-предметниксенчен 80 процентĕ компьютерпа ĕçлеме пĕлет, анчах та темшĕн вĕсенчен 40 проценчĕ çеç ăна урок тата класс тулашĕнчи мероприятие ирттернĕ çĕрте усă курать. Атайкассинче, лицейре, Çĕньял-Покровскинче, Çатра-Хочехматра, Тренккассинче ку енпе нимĕнле чăрмав та çук. Анат-Кĕнер, Иккасси, Мамăш, Янăш шкулĕсенчи вĕрентекенсен çӳлерех асăннă шкулсенчен тĕслĕх илмеллех.

***– Яланхиллех районти педагогсем хăйсен анлă канашлăвне август уйăхĕнче ирттереççĕ. Кун пирки мĕн калана пулăттăр?***

***– Кăçалхине Кӳкеçри культура керменĕнче*** палăртнă, вăл ***ыран*** иртет. Вĕрентекенсем «Вĕрентӳ учрежденийĕсем – çĕнĕ экономика условийĕнче» тема тавра тĕрлĕ ыйту сӳтсе явĕç. Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсем укçа-тенкĕпе хуçалăх ыйтăвĕсене хăйсемех тытса пырĕç малашне. Пĕр сăмахпа, хăйсен бухгалтери пулĕ. Кăçалхи вĕренӳ çулĕнчен ĕç укçи тӳлессипе çĕнĕлле ĕçлеме пуçлатпăр. Ун çинчен тĕплĕнрех çитес номерсенчен пĕринче ăнлантарăпăр. Хальхи канашлура нумай ыйту хускатăпăр. Педагогсене вара пурне те ăнăçу сунатăп. Çитес вĕренӳ çулĕнче вĕсен те, вĕренекенсен те тата та нумайрах çитĕнӳ тумалла пултăр.

А.АРДАЛИОНОВА калаçнă.

### ✵ Хаçатра çырнă хыççăн

## ПУЛĂШМА ЫЙТАТПĂР

***Хаçатăн 86-мĕш номерĕнче «Саккунпа килĕштермелле» материал пичетленсе тухрĕ. Хыççăнах редакцие çак çыру килсе выртрĕ.***

Эпир пурăнакан 1, 2 тата 3-мĕш çуртсем Карачура ялĕнчи 9-мĕш километр ураменче, федераци çулĕн хĕрринче, вырнаçнă. Вĕсене 1965 çулта лартнă. Пирĕн çуртсенче канализаци те, шыв сивви те, вĕри те çук. Хваттерсене сивĕ шыв хамăр кĕртнĕ. Кунта пурăнакансенчен нумайăшĕ Чулхула чукун çулĕ çинче ĕçлесе пенсие тухнă. Манăн упăшка та унта вун саккăрмĕш çул ĕçлет.

Пирĕн çуртсем çĕрĕн-кунĕн чĕтресе тараççĕ, пӳртре пĕр-пĕринпе калаçни илтĕнмест. Нумаях пулмасть 1-мĕш пӳрт çумне магазин туса лартрĕç. Ун таврашĕнче çамрăксем ĕçе каймасăр эрех-сăрапа иртĕхеççĕ.

Чăнах та, пирĕн çуртсемпе юнашарах мунчасемпе сарайсем, çĕр лаптăкĕ 5-шер сотка. Вĕсене пирĕнтен туртса илесшĕн. Тахçан вĕсем Чулхула чукун çулĕн балансĕ çинче шутланса тăнă. 2005 çулта Шупашкар районне панă.

5-шер сотка çĕр пирки калас килет. Çак ыйтупа эпир Лапсар ял тăрăхĕн администрацийĕнче темиçе те пулнă. Унта пирĕн заявленисене йышăнмаççĕ, çавăнпа районцентра темиçе те кайрăмăр. 2005 çулта коллективлă çыру та янă, анчах пирĕн ыйтăва татса паман-ха. Юлашки çырăва 2007 çулхи июль уйăхĕнче ятăмăр, ун айне 12 çын алă пуснă. Пирĕн ыйтăва пăхса тухса пулăшасса шанатпăр. Мунчасемпе сарайсем йышăнакан çĕрсене саккунпа килĕштерсе пама ыйтатпăр.

Л.ГАВРИЛОВА, Карачура ялĕ.

## ШТРАФ ПАНĂ

Россельхознадзорăн республикăри управленийĕ Ишлейри «ПКФ «Надежда» общество Расçейĕн ветеринари саккунĕсене мĕнле пăхăнса ĕçленине тĕрĕсленĕ, çитменлĕхсем тупса палăртнă. Уйрăммăн илсен, ашран тăвакан чĕрĕ апатăн пĕр пайĕнче дефростаци палли пур тесе пĕтĕмлетнĕ. Хăш-пĕр таварăн сертификачĕ çук т.ыт.те. Саккунсене тата ветеринари-санитари йĕркине пăхăнманшăн кăлпасси цехĕн пуçлăхне административлă майпа явап тыттарнă: 3 пин тенкĕ штраф панă.

В.НИКОЛАЕВ.

## ХУДОЙБЕРДИ ТЕ ÇАКЛАННĂ

***Тĕслĕ тимĕр шыракансем, мурсем, хур-кăвакала, чăх-чĕпе канăç памаççĕ, апатне вăркăнтараççĕ, савăтне илсе çухалаççĕ.***

Августăн 15-мĕшĕнче Хыркасси патĕнче тĕслĕ тимĕр шыракансенчен пĕрне – Худойберди Муминова – тытса чарнă. Худойберди автомашинăпа 500 кг тимĕр турттарса пынă, анчах çакна çирĕплетекен документсăр. Пирĕн районта документсăр тимĕр турттарса çӳреме юраманнине пĕлмен пулмалла Худойберди. Халь Худойбердипе милици ĕçченĕсем калаçаççĕ.

Ю.ЮМАН.

## ОБЬЯВЛЕНИЯ. ПĔЛТЕРӲСЕМ

☎ 2-13-80

**Негосударственное общеобразовательное учреждение «Покровская частная школа»** ***объявляет*** прием учащихся на 2007-2008 учебный год.

Адрес: **Чебоксарский район, д.Синьял-Покровское, ул.Северная, д.57. Тел.: 45-41-92.**

Лицензия № Г 108643.

**Кугесьскому райпо** ***требуются*** пекаря, кондитера, продавцы, водители. З/плата 5000 рублей. ***Тел.: 2-13-97, 2-17-55, 2-12-82.***

**МУЗ «Чебоксарская центральная районная больница»** срочно ***требуются:***

– врач-офтальмолог;

– врач-неонатолог.

Требования: высшее образование и наличие сертификата.

– фельдшер-лаборант.

Требования: среднее специальное образование и наличие сертификата.

**Члены инициативной группы** по проведению референдума на территории Атлашевского сельского поселения о возможном размещении полигона твердых бытовых отходов вблизи деревень Ураево Магазь и Верхний Магазь сообщают, что инициативная группа деревень Ураево Магазь и Верхний Магазь под руководством Макарова Христофора Макаровича ликвидирована по решению собрания населения от 19 мая 2007 года. Решения, принятые самовольно Макаровым Х.М. без ведома инициативной группы, считать недействительными.

Общая инициативная группа Атлашевского сельского поселения на очередном заседании освободила Макарова Х.М. от председателя инициативной группы и исключили его из состава группы.

***Инициативная группа.***

**На основании** ст.13 Закона «Об обороте земель с/х назначения» от 24.07.2002 г. № 101 – ФЗ Егорова Л.М., Григорьева И.Н. сообщают о намерении выделиться земельными долями по 2,03 га пашни и по 0,14 га пастбища на земельном участке, расположенном на территории землепользования СХПК «Сад» в поле №3 около Чандров-ского сада. Возражения принимаются в течение месяца по адресу: ***пос.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

✵ ✵ ✵

Отдел Минфина Чувашии по Чебоксарскому району выражает глубокое соболезнование родным и близким в связи с тяжелой утратой – безвременной кончиной руководителя Республиканской службы по тарифам

**Альбины Борисовны**
**ВАСИЛЬЕВОЙ**
**и ее мужа**
**Кронида Савиновича**
**ВАСИЛЬЕВА.**

Администрация Чебоксарского района выражает искреннее соболезнование родным и близким в связи с тяжелой утратой – безвременной кончиной руководителя Республиканской службы по тарифам

**Альбины Борисовны**
**ВАСИЛЬЕВОЙ**
**и ее мужа**
**Кронида Савиновича**
**ВАСИЛЬЕВА.**

Управление Пенсионного фонда Российской Федерации (государственное учреждение) в Чебоксарском районе Чувашской Республики – Чувашии выражает глубокое соболезнование первому заместителю главы администрации Чебоксарского района Егоровой Альбине Егоровне в связи с преждевременной утратой двоюродной сестры

**Альбины Борисовны**
**ВАСИЛЬЕВОЙ**
**и ее мужа**
**Кронида Савиновича**
**ВАСИЛЬЕВА.**

Профком ЗАО «Паха тĕрĕ» выражает глубокое соболезнование родным и близким по поводу трагической смерти руководителя Республиканской службы по тарифам

**Альбины Борисовны**
**ВАСИЛЬЕВОЙ**
**и ее мужа**
**Кронида Савиновича**
**ВАСИЛЬЕВА.**

МУЗ «Чебоксарская центральная районная больница» скорбит по поводу смерти

**Таисии Ивановны**
**ИВАНОВОЙ,**

более 18 лет проработавшей машинистом по стирке и ремонту спецодежды в Чебоксарской центральной районной больнице и выражает соболезнование родным и близким.

МУЗ «Чебоксарская центральная районная больница» выражает глубокое соболезнование медицинской сестре терапевтического отделения Атлашевской участковой больницы Чебеновой Зельфие Минулловне в связи со смертью мужа

**Рината Халиулловича**
**ЧЕБЕНОВА.**

***24 августа в Доме культуры продажа обуви Ульяновской фабрики.***

***Продается корова красной масти. Чебоксарский район, д.Яныши. Тел.: 89278600478, 89278488357.***

**Конкурсный управляющий** ***сообщает*** о реализации имущества ПСХК «Ишлейский», расположенного: ЧР, Чебоксарский район, с.Ишлеи, путем публичного предложения закрытого по форме подачи предложений по начальной цене лота (руб.):

№1. Право требования (доля ПСХК «Ишлейский») в уставном капитале ООО «Агрофирма «Букет Чувашии» – в размере 3 516 800 руб.

Продажа доли будет проводиться путем заключения прямых договоров с потенциальным покупателем предложившим максимальную цену.

Заявки принимаются с момента публикации в течение 30 дней с 09.00 до 17.00 по адресу: 428008, г.Чебоксары, ул.Текстильщиков, 10-302. Тел.факс: **(8352) 39-06-35, 63-05-11.**

Рассмотрение заявок и подведение итогов продажи в 10.00 час. 25.09.2007 г. по адресу заявок. Победитель торгов – лицо, предложившее максимальную цену за лот.

**В связи** с признанием недействительными выдел земельных долей Григорьевой В.В., Михайловой А.И., Беловой Э.В., Солдатовой О.Е., Глухова В.П., Лазаревой Т.П., Чайниковой А.Г., Фасхутдинова М.Г., Щемякиной В.А. данные лица в соответствии ст.13 Закона «Об обороте земель с/х назначения» от 24.07.2002 г. № 101-ФЗ заявляют о намерении выделить земельные доли на земельном участке, расположенном на территории землепользования СХПК «Сад» в поле №3 (пашни) около д.Чандрово для расширения личного подсобного хозяйства: Глухов В.П., Григорьева В.В., Михайлова А.И., Белова Э.В., Солдатова О.Е., Лазарева Т.П., Чайникова А.Г. по 2,03 га пашни, Фасхутдинов М.Г. пять долей по 2,03 га пашни, Щемякина В.А. десять долей по 2,03 га пашни. Возражения принимаются в течение месяца по адресу: ***пос.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

***Организована*** Ишакская ярмарка выходного дня на земельном участке площадью 2,32 га с кадастровым номером 21:21:27 13 01:0001, расположенном по адресу: ЧР, с.Ишаки, ул.Базарная, д.2.

Адрес: ***пос.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: (8240) 2-15-92.***

**Предполагается** продление на 11 месяцев срока аренды земельного участка площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:15 03 02:0033, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, д.Сятракасы, ул.Родниковая (земли населенных пунктов), для индивидуального жилищного строительства.

Адрес: ***пос.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: (8240) 2-15-92.***

**Предполагается** проведение капитального ремонта подземной теплотрассы от жилого дома №62 до жилого дома № 66 и через дорогу к дому №59 по ул.Советская п.Кугеси на земельном участке площадью 0,0480 га (земли населенных пунктов).

Адрес: ***пос.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: (8240) 2-15-92.***

**Предполагается** реконструкция тепловых сетей от дома №12 до дома №2 по ул.Шоссейная п.Кугеси на земельном участке площадью 0,036 га (земли населенных пунктов).

Адрес: ***пос.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: (8240) 2-15-92.***

**Предполагается** предоставление в собственность (за плату) земельных участков из земель населенных пунктов общей площадью 0,3370 га, в том числе:

участок №1 площадью 0,2214 га с кадастровым номером 21:21:18 02 02:0011, расположенный по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д.Большой Чигирь, ул.Марсельского для ведения личного подсобного хозяйства без права возведения на нем зданий и строений;

участок №2 площадью 0,1156 га с кадастровым номером 21:21:18 02 02:0040, расположенный по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д.Большой Чигирь, ул.Марсельского для огородничества.

Адрес: ***пос.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: (8240) 2-15-92.***

ТĂВАН ЕН
(“КРАЙ РОДНОЙ”)
Чебоксарская районная газета

Учредители:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики,
РГУ “ Редакция Чебоксарской районной газеты “Тăван Ен”,

Газета зарегистрирована в Управлении Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу 8 ноября 2005г. ПИ №ФС 18-2477

429500, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

Газета выходит на чувашском языке, с периодической подачей страниц на русском, два раза в неделю - по средам и субботам.

Рукописи не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

Гл. редактор - 2-12-61, отдел сельского хозяйства, отдел писем ,отдел общественно-политической жизни - 2-21-88, бухгалтерия - 2-13-80, 2-12-59. E-mail: gazeta@chebs.cap.ru

Номер отпечатан в ГУП «ИПК «Чувашия». Тел.21-00-23.

Отв.секретарь В.Т.ИВАНОВА

Дежурный по номеру: В.Т.ИВАНОВА.

Печать офсетная. Объем 1,0 печ. лист.
Номер подписан в печать: 21.08.2007 г. в 16 час. 00 мин.
Тираж 2085. Заказ №
Индекс газеты - 54820.